66

# ПОУЧЕНІЕ

ПРОТИВЪ ЧУВАШСКАГО

# ЯЗЫЧЕСКАГО

## ОБЩЕСТВЕННАГО ЖЕРТВЕННАГО МОЛЕНІЯ.

ВТОРОЕ

исправленное и дополненное изданіе

Православнаго Миссіонерскаго Общества.

КАЗАНЬ.
Типо-Литографія В. М. Ключникова, Проломная ул. с. д.
1891.

Отъ Совѣта Братства Святителя Гурія печатать дозволяется. Казань. Сентября 12 дня, 1891 г.

Предсѣдатель Совѣта Братства Епископъ **Никаноръ**, Викарій Казанской Епархіи.

613

# ПОУЧЕНІЕ

## ПРОТИВЪ ЧУВАШСКАГО ЯЗЫЧЕСКАГО ОБЩЕСТВЕННАГО ЖЕРТВЕННАГО МОЛЕНІЯ.

### I.

Тăванăмсем, Іисус Христос Туррăмăр сире канăçлăх патăр, çăлăнмалла тутăр. Епĕ сире пĕтĕм ђунтан йуратса, ырă сунса сире çак сăмахсене калатăп. Епĕ священнике Турă ырăлăхĕпе кĕнĕ; архіерей аллине ман пуç çине хурса кĕл тунă тăрăх Турă мана священник тивлетне панă. Епĕ архіерей хушнă тăрăх Турă ирĕкĕпе сирĕн кĕлĕçĕ пултăм, сире Туррăн законне тĕпĕ йĕрĕпе ђипер каласа ĕнентерекен, Турă законĕпе пурăнма вĕрентекен пултăм. Акă ĕнтĕ епĕ сирĕн хушшăрта Турă ĕçне туса пайтах пурăнатăп,

Ҫак вӑхӑтра сиртен нумайӗшӗ Турӑ пулӑшнипе ҫӑн Турра пӗлсе ӗненҫӗҫ, Турӑ законне ырӑ кӑмӑлпа йуратса пурӑнма пуҫларӗҫ, ӗлӗкхи суйа йӑласене пӑрахрӗҫ. Ҫапах та сирӗн хушшӑрта суйа йӑласене пӑрахманнисем те нумай. Вӗсем ҫӑн Турра пӗлмеҫҫӗ, ҫӑн Турӑ ҫинҫен вӗренме шухӑшламаҫҫӗ, ҫиркӳре мӗн вӗрентнине килсе итлемеҫҫӗ, илтсессӗн те ӑна ӗненмеҫҫӗ. Вӗсен ҫунӗсем пит усал, ҫул пек хытӑ, ҫавӑнпа вӗсем Турӑ сӑмахне ӗненмеҫҫӗ, суйа йӑлапах пурӑнаҫҫӗ.

Кӑҫал йӑвӑрлӑх нумай пулҫӗ: кирлӗ вӑхӑтра ҫӑмӑр ҫумарӗ, ҫанталӑк пит вӗри тӑҫӗ, ыраш та, ака тырри те наҫар пулҫӗ, тата выҫӑхсем те ҫылай вилкелерӗҫ. Ҫакӑ йӑвӑрлӑх пирки суйа йӑлана пӑрахман ҫынсем Христос законӗпе пурӑнакансене ӳпкелеме пуҫларӗҫ; „есир ҫӳк тутармастӑр, ҫавӑнпа тырӑ пулмаст ӗнтӗ,“ тесе ӳпкелеҫҫӗ.

Ей тӑванӑмсем! Суйа йӑлапа пурӑнакан ҫынсем ҫапла каланине ан ӗненӗр есир, вӗсем ҫапла калани суйа сӑмах. Есир мана калӑрха: выҫӑх пусса вӗсем кама ҫӳк тӑваҫҫӗ? Вӗсем

ыйтсассăн калаççĕ: Турра тăватпăр, теççĕ. Турă выљăхпа ђўк тунине ђăнах та хапăл илетши? Ăна есир пĕлеттĕр-и? Есир Евангеліе кĕнекине лайăхрах вуласа пăхăрха, выљăхпа ђўк тăвасси çинђен унта пĕр сăмах та каламан. Мĕншĕн вĕсем выљăхпа ђўк тăвасшăн тăрăшаççĕ? Вĕсем калаççĕ: пирĕн ваттисем авал Турра выљăхпа ђўк туса пурăннă, епир те çавăнпа ђўк тăватпăр, ђўк туса епир Турра выљăх парни паратпăр, теççĕ. Вĕсем çапла калани йунăш сăмах. Турра выљăх парни парас йăла пăрахăçа тухни 1891 çул çитет ĕнтĕ. Ђăвашсем—тĕне кĕнĕ çынсем, вĕсенĕн ĕлĕкхи пур суйа йăласене пăрахса, Христос законне тытса пурăнмалла, Турра выљăх парни пама тахçанах пăрахмалла. Пирĕн аттесем, асаттесем тĕне кĕрсен çав суйа йăласене пĕлмен пирки пăрахмасăр йунăшса пурăннă, халĕ те нумайĕшĕ вĕсен суйа йăлисенех тытса пурăнаççĕ. Пирĕн ђăваш халăхĕ Христос тĕнне кĕни 200 çул ытла ĕнтĕ. Çапах та вĕсем ђăн Турра пĕлсе çутăлаймаççĕ, ĕлĕкхи пекех тĕттĕмре тăраççĕ, пăрахăçа тухнă выљăх парнине туса пурăнаççĕ.

Тăванăмсем! Ёлĕк ђăнахта етемсем выђăх пусса Турра выђăх парни панă. Кайран вăл выђăх парнине Турă Хăй пĕтмелле тунă, ун вырăнне ђăн парне, йунсăр таса парне тухмалла тунă. Вара вăхăт ҫитсен ҫав ђăн таса парнене Турă Ывăлĕ Іисус Христос Хăй ирĕкĕпе ђи авал ҫапла пулмалла тунă. Вăл ĕҫ ак йепле пулнă:

Адампа, Ева ҫылăха кĕнĕрен етем йăхĕ Турă умĕнђе айăплă пулнă, шуйтан ирĕкне кĕнĕ. Турă етемсем айăпне ҫухатма, етемсене шуйтан ирĕкĕнђен кăларма, етемсене ҫылăхран, ылханран, вилĕмрен ҫăлма вĕсем патне Хăйĕн пĕртен пĕр Ывăлне йама пулнă. Вăл каланă: *арăмран ҫуралассисенђен Пĕри ҫĕлен пуҫне таптаса ҫĕмĕрĕ*, тенĕ. Туррăн: „арăмран ҫуралассисенђен Пĕри,“ тенĕ сăмахĕ Хăйĕн пĕртен пĕр Ывăлĕ етем йăхне ҫăлма ҫĕр ҫине таса хĕртен арсăр ҫуралса килессине пĕлтернĕ; „ҫĕлен пуҫне таптаса ҫĕмĕрĕ,“ тенĕ сăмахĕ етем пулнă Турă Ывăлĕ шуйтан хăватне ҫĕмĕрсе, етем йăхне шуйтан аллинђен кăларса илессине пĕлтернĕ. Етемсем хайсене Ҫăлакан килессине

ан манђђăр, тесе, Турă етемсене выђăхсем пусса Хăйне парне пама хушнă. Ҫав выђăх парни вара тĕнђери етем йăхне Ҫăлакан Христос килессине пĕлтерсе тăнă, Ҫăлакан Христос пĕтĕм тĕнђе ҫылăхне Хăй ҫине илсе, Хăйне Хăй Атте Турра парнене кўрессине пĕлтерсе тăнă. Вăл выђăх парнисем хайсем тĕллĕн етем ҫылăхне каҫарайман, етеме Турă умĕнђе тўрре кăларайман, Турă Ывăлĕ Іисус Христос тĕнђене етемсене ҫăлма килессине анђах пĕлтерсе тăнă. Вăхăт ҫитсессĕн вара етемсене ҫăлма Турă Ывăлĕ Іисус Христос килнĕ. Вăл ҫўлтен анса Св. Сывлăш хăвађĕпе таса Марія хĕртен ўтленсе ҫын пулнă та, етемсене ҫылăхран, ылханран, вилĕмрен ҫăласшăн Хăйне Хăй хĕрес ҫинђе Атте Турра парнене кўнĕ. Вăл Хăйне Хăй ҫапла парнене кўрсе етем айĕпне, етем ҫылăхне Хăй ҫине илнĕ; Хăйĕн етемлĕхĕпе хĕрес ҫумне пăталанса, асапланса вилсе етем ҫылăхне пăрахăҫ тунă, етеме Турă умĕнђе каллах тўрре кăларнă. Іисус Христос пĕтĕм тĕнђери етемсемшĕн Хăйне Хăй ҫапла Ашшĕне парнене кўнине пĕлтерекен ĕлĕкхи

выђăх парнисем варą пăрахăç пулнă; ун вырăнне Турă ђăн парне, йунсăр таса парне кӳме хушнă. Ашшĕпе Ывăлĕ çапла канаш тунă; Ывăл Турă тĕнђене килнĕ ђух Ашшĕне каланă: Есĕ выђăх пусса парне панине илес темерĕн, Мана ӳтленмелле турăн. Есĕ çунтарса паракан выђăх парнисене хапăл илместĕн. Акă ĕнтĕ Епĕ Ман çинђен кĕнеке çине çырса хунă пек Санăн ирĕкӳне тума кайатăп, тенĕ (Евр. X—7). Йĕлĕкхи выђăх парнисем çапла пăрахăç пулассине Турă авал Малахія пророк урлă Хăй каласа панă; Вăл каланă: есир кӳрекен выђăх парнисем Мана йурăхлă мар. Ман йатăма хĕвел тухĕçĕнђен пуçласа хĕвел анăçне çитĕђђен пур халăхсем аслăласа тăрĕç, пур те Мана өимiам кӳрĕç, таса парне парĕç, тенĕ (Малах. I, 10—11). Выђăх парни пĕтесси çинђен Турă тата Данiил пророк урлă та каласа пĕлтернĕ.

Ђăн парнене, йунсăр таса парнене Ывăл Турă Iисус Христос етемсене Хăй кăтартса вĕрентсе хăварнă. Вăл ĕç ак йепле пулнă:

Iисус Христос Хăйне Хăй Атте Турра пар-

нене кўреҫҫен пӗр кун маларах вӗренекенӗсемпеле аслӑ апат туса, ҫӑкӑрпа ерехе пиллесе тасатнӑ та, вӗсене Хайӗн ҫӑн ӳҫӗпе ҫӑн йунӗ туса, вӗсенҫен апостолсене пай илтернӗ. Ҫапла туса Вӑл Хайӗн ӳҫӗпе тепӗр кунне Голгоѳа тӑвӗ ҫинҫе пуҫланса йаланах Атте Турра кўрӗнсе тӑрассине пӗлтернӗ, тата Хай ӳҫӗпе йунӗ етемсемшӗн йаланах вакланса йухса тӑрассине, Хай ӳҫӗпе йунӗ тӑрӑх йаланах етемсенӗн ҫылӑхӗсене каҫарса пырассине пӗлтернӗ, Хай ӳҫӗпе йунӗнҫен ӗненекенсене йаланах ӑша пай илтерсе, вӗсене Турӑпа пӗрлештерсе пырассине пӗлтернӗ; унтан тата: пирӗн Турра памалли ҫӑн парне, пирӗн ҫылӑхсене ҫӑн каҫаракан парне Хай ӳҫӗпе йунӗ пулассине пӗлтернӗ. Ҫапла Іисус Христос Турӑ апостолсем урлӑ пире ҫӗнӗ йӑлапа Турра ҫӑн парне кўрсе пурӑнма вӗрентсе хӑварнӑ. Ҫав таса парне тӑрӑх Турӑ пирӗн ӑша кӗрсе пире Хайпе пӗрлештерет. Турӑ малтанхи етемсене Рйран хӑваласа кӑларнӑ ҫух Ҫӑлакан Христос килессине асӑнса тӑмашкӑн етемсене выҫӑх парнисем кўме вӗрентнӗ; халӗ етемсене Райа кўртес ҫух

Хӑй килнине асӑнса тӑмашкӑн этемсене ҫӗнӗ йӑлапа таса парнесем кӳме хушса хӑварнӑ. Выҫӑх парнисем пӑрахӑҫ пулса таса парнесем кӳресси тӗнҫере ҫапла пуҫланнӑ, кив йӑла пӗтсе ҫӗнӗ ырӑ йӑла ҫапла тухнӑ. Ҫапла ӗнтӗ епир Іисус Христос Турӑ Хӑй вӗрентсе хӑварнӑ пек ҫав таса парнесене ҫиркӳре йаланах Турра кӳретпӗр, вӑл таса парнесенҫен хамӑр ӑша пай илсе ҫӗр ҫинҫе пурӑннӑ ҫухах Христоспа пӗрлешетпӗр, вилсен ӗмӗрлӗх пурӑнӑҫа кӗме тивлет тупатпӑр. Епир вӑл таса парнесене Турра кашни Литургіярах халӑхпа кӳретпӗр.

Тӑванӑмсем! Халӗ ҫӳк туса пурӑнакан ҫӑваш ҫыннисем ӗлӗкхи выҫӑх парнисем пӑрахӑҫа тухнине пӗлмеҫҫӗ, пӗлмен пирки аташса ҫӳк туса пурӑнаҫҫӗ, пӗлмен пирки вӗсем Турра ҫӳк туса, выҫӑх парни паратпӑр епир, теҫҫӗ. Вӗсем Турӑран ырӑлӑх тупастӑн выҫӑхпа ҫӳк тӑваҫҫӗ, ҫӳк туса вӗсем Турӑран ырӑлӑх илеймеҫҫӗ, вӗсем ҫӳк туса Турра хӑйсенҫен тата ытларах сивӗтеҫҫӗ, хӑйсем те Турӑ умӗнҫе пит ҫылӑхлӑ пулаҫҫӗ. Св. Павел апостол калать:

„ей савнă çыннăмсем! ђўк тăвасран сыхланăр. Суйа тĕнлĕ çынсем ђўк туса Турра мар, шуйтана пуççапаççĕ. Манăн сире шуйтансене пăхăнтарассăм килмест. Турра асăннă куркаран та, шуйтана асăннă куркаран та ĕçме пултараймăпăр; Турă апатне те, шуйтан апатне çиме пултараймăпăр, йепле епир (ђўк туса) Турра çилентерме хăйăпăр? Епир Турăран хăватлăрах-и-мĕн?“ тет. (1 Корин. X, 14, 20—22). Тата Іисус Христос Іудейсене каланă: „Çĕрекен çимĕçшĕн ăн тăрăшăр, ĕмĕрхи ђĕрĕлĕхе кĕмелли çимĕçе шырăр, вăл çимĕçе сире Етем Ывăлĕ парĕ; Ун çине Атте Турă Хăй паллине хурса йанă,“ тенĕ. (Іоан. VI, 27),—Çавăнпа, тăванăмсем, тыр пул лайăх пултăр тесе, пирĕн Турра ыђăхпа ђўк тăвас пулмаст. Ăна пирĕн ђиркўре таса парнепе кĕл туса йăлăнас пулат.

## II.

Ей тăванăмсем! Турă мĕншĕн пире тыр-пул памасăр аптăратат? йе тата пĕр-пĕр урăх йăвăрлăх кăтартса асаплантарат? Турă пире ха-

мăр çылăхсемшĕн йăвăрлăх кăтартаť. Епир Турă умĕнђе пĕр май çылăха кĕретпĕр, пысăк çылăх тумасан та пĕђĕкçĕ çылăхсем нумай тăватпăр, çапла вара Турă умĕнђе çылăхпа усалланса йурăхсăра тухатпăр. Турă вара пире çылăхран ўкĕнтересшĕн вăхăђĕ вăхăђĕпе выçлăх та кăтартаť, урăх йăвăрлăх йарса та асаплантараť. Тыр-пулшăн, çăмăршăн пирĕн Турра выђăх пусса ђўк тăвас пулмасť, çылăхăмăрсенђен ўкĕнсе Турра таса парнепе кĕл тăвас пулаť, çылăхăмăрсене каçарттарса, таса парнесенђен хамăр ăша пай илсе тасалас пулаť, çылăха кĕресрен сыхланса пурăнас пулаť. Ахав патша вăхăтĕнђе Турă Еврейсене мĕншĕн 3 çул та 6 уйăх çăмăр паман? Еврейсем Турă умĕнђе çылахланнăшăн паман. Выçлăха та, урăх йăвăрлăха та Турă пире ђўк туманшăн кăтартмасť, хамăр çылăха кĕнĕшĕн кăтартаť. Астăвăрха, тăванăмсем! Епир çылăхăмăрсенђен тасаласшăн тăрăшатпăр-и? Типĕре типĕ тытса говѣт тăватпăр-и? Çылăха кĕресрен сыхланатпăр-и? Пĕр пĕринпе тўрĕ пурăнатпăр-и? Туррăн праздникĕсене хисеплетпĕр-и? Епир çак ырă ĕçсене тума ўркенет-

пӗр, нумайӗшне тумасӑр хӑваратпӑр. Ҫула Петрпа Павел апостолсем типпи ҫитсессӗн, пирӗн ҫӑвашсен ҫӳк тума сӑра ӗҫме вӑхӑт пур,— ҫиркӗве кӗлле ҫӳреме вӑхӑт ҫук. Выҫлӑх пулнӑшӑн, йе урӑх йӑвӑрлӑх пулнӑшӑн епир хамӑр айӑплӑ, уншӑн пирӗн хамӑра хамӑрӑн ӳпкелес пулаТ; епир хамӑр пурӑнма пӗлместпӗр. Тӑванӑмсем! Турӑ пире тата сӑнаса пӑхасшӑн та йӑвӑрлӑх кӑтартса асаплантараТ. Вӑл аван таса Іова сӑнаса унӑн мӗн пур туприне, мулне, выҫӑх-ҫӗрлӗхне, аҫисене пӗр кунта пӗтерттерне, Іов ҫине усал ҫир йарса, ӑна виҫӗ ҫул асаплантарнӑ, Хӑйне сӑнанӑшӑн Іов Турра ӳпкелемен; пӗр-пӗр йӑвӑрлӑх килсессӗн, пирӗн те уншӑн Турра ӳпкелес пулмасТ. Іов пур асапне Турра ӳпкелемесӗр ҫӑтса ирттернӗ, Турӑ ӑна тӳснӗшӗн кайран ӗлӗкхинҫен те ытларах пуйан тунӑ. Епир Турӑ сӑнанине Іов пек ҫӑтса тӳссессӗн, Турӑ пире те ҫавӑншӑн тепӗр вӑхӑтра ырӑлӑхне нумай парӗ. Пирӗн пӗр пӗрне „ҫӳк туманшӑн тыр пулмарӗ,“ тесе ӳпкелесе, ҫылӑха кӗрес пулмасТ, пӗр Турра йӑлӑнса, Ӑна шанса тӑрас пулаТ, йӑвӑрлӑх килсен Іов пек

„Мухтав Турра, Туррă паҫҫĕ те Турă илҫĕ, Туррăн йаҫҫĕ мухтавлă пултăр,“ тесе калас пулаҫ.

Тăванăмсем! Кăҫал ҫăвашсем тырă пулман пирки хăш хăш ҫĕрте темиҫе йалпа пĕрле пухăнса ҫўк турĕҫ, вĕсем унта уй ҫўкне те, ҫăмăр ҫўкне те лайăх тăрăшса турĕҫ. Вĕсен хирĕнҫе ҫапах та ҫăмăр ҫумарĕ. Турă ҫўк тунине йуратаҫ пулсан вĕсене ҫăмăр ăраснах парĕҫҫĕ; вара вĕсен тырри те авантарах пулĕҫҫĕ. Кăҫал ҫăмăр ҫуман пирки урăх ҫĕрти ҫăвашсем те хăшĕ хăшĕ виҫшер хут ҫўк тунă, тет. Ҫапах та вĕсенĕн тырри ҫўк туманнисен тырринҫен лайăхах пулман. Йепле вара ҫăвашсем „Турă пире ҫўк туманшăн ҫиленет, ҫўк туманшăн тыр- пул памасҫ, ҫăмăр памасҫ.“ тесе калаҫҫĕ? Авал пур ҫăвашсем те ҫўк туса пурăннă, уй ҫўкне те, ҫăмăр ҫўкне те нумай тунă. Ҫапах та вĕсене вăхăҫĕ вăхăҫĕпе Турă йăвăрлăх кăтартнăҫке. 1845-мĕш ҫулта пирĕн ҫĕрте пĕр выҫлăх пулнă, ҫăвашсем мăйан ҫăкри ҫисе кăна пурăннă. Унтан ĕлĕкрех тата тепĕр выҫлăх пулнă, ҫынсене ҫиме мăйан та пулман; халăх вара йăвăҫ ҫăвăлҫипе икел ҫисе кăна пуррăннă. Турă

халӑха ҫӳк туманшӑн выҫлӑх кӑтартаҫ пулсан, авал ҫӑвашсем пӗр выҫлӑх курмасӑр пурӑннӑ пулӗҫҫӗҫ: авал вӗсем халӑхпа кашни ҫул ҫӗршер тенкӗлӗх ытла ҫӳк тунӑ, ҫапах та йӑвӑрлӑх курмасӑр пурӑнайман.

Тӑванӑмсем! Мӗн тӗрӗссине, мӗн йунӑшшине есир хӑвӑр ӑсӑрпа шухасласа пӗлӗр, сире хӑвӑра Турӑ ӑс панӑ. Турӑ етеме мӗншӗн ӑс панӑ? Етеме Вӑл Хӑй законне пӗлтересшӗн, кунти тӗнҫере Хӑй законӗпе пурӑнтарасшӑн, вилсен етеме Ҫӳлти Патшалӑха кӳртесшӗн, ырӑпа усала, ҫӑнпа суйана уйӑрса пӗлтересшӗн ӑс панӑ. Турӑ пире ӑс паман пулсан, епир выҫӑхпа пӗр пулӑттӑмӑр, Турӑ мӗн тума хушнине, йепле пурӑнма хушнине пӗлмен пулӑттӑмӑр. Турӑ апла туман пире, Вӑл етемсем Хӑй законне лайӑх пӗлҫҫӗр тесе, Хӑй законӗпе пурӑнҫҫӑр тесе, етемсене ӑс панӑ. Ҫӑвашсенҫен нумайӗшӗ Турӑ панӑ ӑспа шухӑшламаҫҫӗ, Турӑ хушнине, Турӑ хушнӑ тӑрӑх йепле пурӑнма кирлине ӑспа шухӑсласа пӗлмеҫҫӗ, пӗлме те тӑрӑшмаҫҫӗ; вӗсем мӗн тӑвас килҫӗ, ҫавна тӑваҫҫӗ, йепле пурӑнас килҫӗ, ҫапла пурӑнаҫҫӗ.

Ҫапла вара вӗсем Турӑ умӗнҭе выҫӑх пекех пулаҫҫӗ. Тӑванӑмсем! Ҭӑваш хӑлӑхӗ те Турӑ пултарнӑ ҫынсемех. Вӗсем Христосшӑн тӗне кӗрсе Христос хӑватне илнӗ. Вӗсенӗн те ӗнтӗ Христос Турӑ законне ӑспа лайӑх пӗлсе, кӑмӑлпа хытӑ йуратса пурӑнмалла. Ҫапах та ҭӑвашсем нумайӗшӗ ӗлӗкхи суйа йӑлапах пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем кӗтӳрен уйӑрӑлса кайнӑ, ҫӗтнӗ сурӑх пек. Ҫӗтнӗ сурӑх хӑй тӗллӗн таҫта кайса аташса ҫӳрет. Ҭӑвашсем те ҫавӑн пекех аташса пурӑнаҫҫӗ. Тӑванӑмсем! Ҫӗтнӗ сурӑха йышӗ шыраса тупсассӑн пит савӑнаҭ; суйа йӑлапа аташса пурӑнакан ҭӑвашсем ҭӳк тума пӑрахсан та Турӑ пӗлӗт ҫинҭе ҫавӑн пекех пит савӑнаҭ. Йепле вара ҭӑвашсем: „Турӑ пире ҭӳк туманшӑн ҫиленет, ҭӳк туманшӑн ҫӑмӑр памасҭ,“ тесе калаҫҫӗ? Вӗсем мӗн тӗрӗссине ӑспа шухӑшласа пӗлмеҫҫӗ, пӗлме те тӑрӑшмаҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсем ҫакӑ суйа сӑмахсене каласа ҫӳреҫҫӗ.

## III.

Ей тӑванӑмсем! Пирӗн ҭӑвашсене ҭӳк тума шуйтан тийекен усал сывлӑш вӗрентсе аташта-

раҭ. Шуйтан вĕсен ăсне, кăмăлне, ирĕкне йĕкĕлтесе, вĕсене кирлĕ мар йăлапа пурăнма вĕрентет. Усал сывлăш ҫынсене хăй майлă тăвастăн ĕлĕкреннех нумай аташтарнă: вăл Адампа Евана улталаса ҫиме кирлĕ мар йăвăҫ ҫимĕҫне ҫитернĕ; вăл ҫынсене аташтарса ҫăн Турă вырăнне хĕвеле, уйăха, ҫăлтăрсене, кирeметсене кĕл туса пуҫҫапма вĕрентнĕ; вăл пушă хирте Турă Ывăлне Іисус Христоса та улталасшăн пулнă. Вăл пирĕн ҫăваш халăхне те улталаса аташтараҭ, ҫук тума, пур усал йăласене тытма вĕрентсе пыраҭ. Пирĕн ҫăвашсене тата йумăҫсем пит нумай аташтараҫҫĕ. Тăванăмсем, йумăҫ сăмахне нихăҫан та ан итлĕр есир. Йумăҫсем вĕсем шуйтан тарҫисем. Шуйтан авалтанпах етеме Турăран сивĕтсе хăй йенелле ҫаврасшăн тăрăшаҭ, йумăҫ та ҫăвашсене ҫăн Турăран сивĕтесшĕн тăрăшаҭ. Йумăҫсем ҫăвашсене ҫук тума усал сывлăш хăваҭĕпе тăрăшса вĕрентеҫҫĕ. Тăванăмсем! Ҫăваш халăхне ҫапла улталаса пурăнакан йумăҫсем Христос йаҭĕпе тĕне кĕнĕ пулсан та шуйтан ирĕкĕнҭех тăраҫҫĕ. Вĕсен ăсне, кăмăлне, ирĕкне

шуйтан тёттёмре хупăрласа тăрать. Вёсем тёне кёнё çынсем пулсан та ырă кăмăллă Христоса йуратмасăр, Унтан сивёнсе пурăнаççё, çавăнпа вёсем çумне шуйтан тийекен усал сывлăш каллех çыпăçать. Çапла пурăнса йумăçсем хăйсен ђунне пётёмпех пётереççё. Çын ăшне шуйтан йепле кёнипе илтни есир? Ун çинђен Ісус Христос ак çапла каланă: „усал сывлăш çын ăшёнђен тухсассăн, шывсăр çёрсенђе канлёх шыраса çÿрет; вара тупамайсăр калать: каллех хам пăрахса тухнă çуртăма тавăрăнам, тет. Тавăрăнсассăн, вăл çуртне шăлса, тасатса тирпейлесе хунипе курать те, унтан кайса хăйне пёрле урăх хăйёнђен те усалтарах çиђё усал сывлăш йертсе пырса, унта кёрсе вёсемпе пёрле пурăнать. Çав çынна кайранхи малтанхинђен те усалтарах пулать вара,“ тенё (Лук. XI, Зачало 58, 24—26). Çак сăмахсем ак мёне пёлтереççё: çын тёне кёрсессён, ун ăшёнђен усал сывлăш тухса кайать те, ун вырăнне Святой Сывлăш кёрсе вырăнаçать. Тёне кёнё çын Христоса йуратмасăр Унăн законне пăрахса ёлёкхи суйа йăлапах пурăнсан, Св. Сывлăш ун ăшёнђен

каллех тухса кайаҭ, Свят. Сывлӑш тухса кайпине шуйтан кураҭ те хӑйпе пӗрле тата урӑх хӑйӗнҫен те усал ҫиҫӗ сывлӑш йертсе пыраҭ, вӗсем вара пур те ҫав ҫын ӑшне кӗрсе вырӑнаҫаҫҫӗ, ӑна вара ӗлӗкхинҫен те ытларах усаллантараҫҫӗ. Тӑванӑмсем! Йумӑҫ пӑхакан ҫын ӑшне те усал сывлӑшсем ҫавӑнпекех кӗрсе вырӑнаҫаҫҫӗ, ӑна вара тӗне кӗмен ҫынтан та усалтарах тӑваҫҫӗ. Йумӑҫсем ҫав тӗрлӗ усал ҫынсем! „Еспр мӗншӗн Хрпстос законне тытмастӑр?“ тесе ыйтсассӑн, вӗсем калаҫҫӗ: „ҫӑвашсене вырӑс тӗнӗпе пурӑнма йурамасҭ, ҫӑвашсен ҫӑваш тӗнӗпех пурӑнмалла,“ теҫҫӗ. Епӗ сире калатӑп: ҫӑвашшӑн ҫӑваш тӗнӗ, вырӑсшӑн вырӑс тӗнӗ ҫук, тӗнҫере Христосӑн пӗр таса тӗнӗ анҫах. Хӑвӑрах шухӑшлӑрха: йумӑҫсене халӑха улталанӑшӑн сӑвап пулӗ-и, ҫылӑх пулӗ-и? Йумӑҫсене уншӑн пит пысӑк ҫылӑх пулӗ, вӗсен сӑмахне итлекенсене те пит ҫылӑх пулӗ. Ырӑ таванӑмсем! Еспр йумӑҫсем хыҫҫӑн ан кайӑр, вӗсен сӑмахне ан итлӗр, вӗсене ан ӗненӗр: вӗсем пит усал ҫынсем.

Сирӗн хушшӑрта ђук тӑвасшӑн тата ђухӑн ҫынсем пит тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем ђук тӑвас тесе Турӑшӑн мар, хӑйсемшӗн тӑршаҫҫӗ, карланкана тутлӑ ҫиесшӗн халӑха пӑтратса ҫӳреҫҫӗ. Вӗсем ҫук пирки аш та, сӗт-ҫу та килте нумай ҫиеймеҫҫӗ, ђук тунӑ ђух ӑна вӗсем ирӗккӗн тӑраниђђенех ҫийеҫҫӗ, сӑрипе ерехне те тӑранађђенех ӗҫеҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӗсем ђук тӑвасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ. Ђук туни Турра килӗшет-и, килӗшмест-и, ђук тума ђӑнахта кирлӗ-и, кирлӗмар-и, вӑл ђӑн йӑла-и, суйа йӑла-и, — вӗсем ӑна пӗлмеҫҫӗ, ӑна пӗлесшӗн шухӑшламаҫҫӗ; вӗсем карланкана тутлӑ ҫиесшӗн анђах шухӑшлаҫҫӗ те ҫынсене ахаљ улталаса ҫылӑха кӳртеҫҫӗ, халӑха Турӑран сивӗтеҫҫӗ. Тӑванӑмсем! Ҫавӑн пек ҫынсенђен есир сыхланӑр, вӗсен сӑмахне ан ӗненӗр.

## IV.

Ей тӑванӑмсем! Тӗнђере ђӑн тӗн пӗрре анђах, вӑл ђӑн тӗн Христос тӗнӗ. Христос тӗнне сире священниксем каласа вӗрентеҫҫӗ. Священниксем Христос законне халӑха хӑйсем тӗл-

лӗн ӗаласа вӗрентмеҫҫӗ, Турӑ хушнӑ тӑрӑх вӗрентеҫҫӗ. Авал Св. пророксем, апостолсем, Св. аттесем йепле вӗрентсе хӑварнӑ, вӗсем те ҫаплах вӗрентеҫҫӗ. Хӑш ђӑвашсем ҫапах та священниксем каланипе ӗненмеҫҫӗ, вӗсем вӗрентнӗ пек пурӑнмаҫҫӗ, вӗсем каланине тумаҫҫӗ. Йумӑҫсем халӑха шуйтан атаптарнипе вӗрентеҫҫӗ. Ҫапах та вӗсене нумайӗшӗ итлеҫҫӗ, вӗсем хушнине тӑваҫҫӗ. Астӑвӑрха, тӑвапӑмсем! Йумӑҫсем вӗсемултавҫӑсем. Пророксем, апостолсем никама та улталаман, ытти ҫынсене те улталама хушман, йумӑҫсем ҫынна пӗр май улталаса пурӑнаҫҫӗ. Пророксем, апостолсем таса пурӑннӑ, ҫынна та таса пурӑнма вӗрентнӗ. Йумӑҫсем хӑйсем те таса пурӑнмаҫҫӗ, халӑха та таса пурӑнма вӗрентмеҫҫӗ. Пророксене, апостолсене Турӑ хӑват нумай панӑ, вӑл хӑвата апостолсем архіерейсене парса хӑварнӑ, архіерейсем урлӑ вӑл хӑват священниксене те ҫитсе пырать. Йумӑҫсене Турӑ нийепле хӑват та паман, халӗ те вӗсене Турӑ кӗлӗ ҫинђен вӗрентме пӗр хӑват та йамасть; йумӑҫсене йумӑҫ пӑхма шуйтан хӑват парать. Пророксем, апостол-

сем Турӑ тивлеҫӗпе хӑватлӑ ӗҫсем туса нумай ҫынна усӑ кӑтартнӑ: священниксем халӗ Христоса ӗненекен ҫынсене ҫӑласшӑн ҫиркӳри аслӑ ӗҫсене Турӑ хӑваҫӗпе туса тӑраҫҫӗ. Йумӑҫсем хӑйсен ӗҫне шуйтан хӑваҫӗпе тӑваҫҫӗ. Тӑванӑмсем! Тата ак мӗне астӑвӑр есир: пророксем, апостолсем Турӑ законне укҫашӑн, пуйанлӑхшӑн верентмен, священниксем те ӑна укҫашӑн вӗрентмеҫҫӗ. Йумӑҫсем укҫашӑн йумӑҫ пӑхаҫҫӗ, хӑйсен карланкисене тӑрантасшӑн ҫӑваш халӑхне суйа йӑлана тыттарса аташтараҫҫӗ, ҫӑваш пурӑнӑҫне пӑсса Турӑ умӗнҫе ҫылӑхлӑ тӑваҫҫӗ. Пророксем, апостолсем Туррӑн тӳрӗ законне никамран хӑрамасӑр, лайӑх пулсан та, усал пулсан та, пӗр пек каласа вӗрентсе пурӑннӑ; священниксем те Турӑ законне никамран хӑрамасӑр каласа вӗрентеҫҫӗ. Йумӑҫсем хӑйсен суйа ӗҫне ҫынсенҫен хӑраса вӑрттӑн вӗрентеҫҫӗ. Самана лайӑх ҫух вӗсем ҫӳк тӑвасси ҫинҫен пӗр сӑмах та каламаҫҫӗ, халӑх хушшине пӗрпӗр йӑвӑрлӑх килсен, йе выҫлӑх пулсан „Турӑ пире ҫӳк туманшӑн ҫиленет“, тесе йанраса ҫуреҫҫӗ. Христос тӗнӗпе пурӑнакан ҫынсем ну-

майĕшĕ святойа тухпă, вĕсенĕн таса ӳҭĕсем çĕрмесĕр выртаççĕ, тĕлĕнмелле хăватсем нумай тăваççĕ. Суйа тĕн йăлипе пурăннă çынсем вилсен пĕри те святой пулман, вĕсен ӳҭĕсем пĕр хăват та тăваймаççĕ, пур те çĕрсе тăпра пулаççĕ.

Тăванăмсем! Тата ак мĕне астăвăр есир: сирĕн хушшăрта суйа йăлапа пурăнакан ҭăвашсем çулталăкра ҭӳк туса миçе тенкĕ укçа пĕтереççĕ-ши? Вĕсем ҭӳк туса пĕтерпĕ укçана хисеплесе те ˙кăларас çук. Сахал хисеплесенте вĕсем йалсерен хĕрĕхшер, аллăшар тенкĕ пĕтереççĕ, ҭиркӳ валли хăш ҭухне пĕр пус памата хĕрхенеççĕ. Ҭӳк тăвас тесен вĕсем халăх укçине çĕр тенкĕ те хĕрхенмеççĕ, ҭиркӳ валли, йе школа валли хăшĕ хăшĕ пĕр тенкĕ пама та хĕрхенет. Йепле вара вĕсене Турă йураттăр? Мана вĕсен укçи паха мар, вĕсем ҭӳк туса çулсерен виçшер çĕр тенкĕ пĕтерсен те, мана вĕсен ӳкçи паха мар: вăл ман укçа мар. Епĕ вĕсене хăйсене хĕрхенетĕп. Вĕсем ҭӳк туса çылăха пит нумай кĕреççĕ, ҭунĕсене ҭистийах пĕтереççĕ: вĕсем ҭӳк тунăшăн тамăка анмалла пулаççĕ. Çавăнпа епĕ вĕсене хĕрхенетĕп, тăванăмсем,

çавăнпа вĕсене ҫук тума пăрахтараспăн тăрăшатăп. Ҫук тума хăçан пăрахĕç-ши вĕсем? Вĕсем шухăшлаççĕ пулĕ: священник пире ҫук тума мĕншĕн пит пăрахтараспăн тăрăшат? теççĕ пулĕ. Ах, тăванăмсем! Ҫăвашсем ҫук тунине йепле ҫăтам епĕ? Акă есир хăвăр илтеттĕр: ҫук туни—Турра кирлĕ парне мар, вăл суйа парне, вăл суйа парнене кўме ҫăвашсене усал сывлăш вĕрентет. Епĕ сирĕн священник, сире пăхакан кĕтўçĕ. Турă тĕнҫене сут тума килсен, ҫи малтан Турă умĕнҫе приход халăхĕшĕн ман хисеп памалла. Çавăнпа епĕ суйа йăлапа ҫук туса пурăнакан ҫăвашсене ҫук тума пăрахтарса, Христос законĕпе пурăнтараспăн тăрăшатăп.

Ҫук туса пурăнакан ҫăваш çыннисем! Сире ырă сунса калатăп: ҫук тума пăрахăр есир, кунти ĕмĕрте темĕн ҫухлĕ усал пулсан та ҫук тума ан шухăшлăр, йумăçсем каланине ан итлĕр, вĕсем хыççĕн ан кайăр. Есир Турра кĕл тума, Ăна таса парне, ҫăн парне кўме ҫиркĕве килĕр: нумай ырăлăхлă Турă сире каçарса çăлĕ. Аминь.